Николай Угарин

# ИРТНИ ТЕ ТАВРĂНАТЬ

(2 пайлă лирикаллă мелодрама)

Пьесăри çынсем:
Улька
Çтаппан – унăн упăшки
Павел – вĕсен ывăлĕ
Полина – Павел арăмĕ
Анна – кӳршĕ
Анюта – Анна хĕрĕ
Ваçça – ял каччи
Нина – вăтăра çывхаракан хĕр

## 1 пайĕ.

1 картина. *Ял урамĕ. Пĕр енче Улькасен килкартийĕ, тепĕр енче – Аннасен. Сцена пĕр айккинче пусă. Ваçça Павел тата Анюта шавласа чупса килеççĕ. Анютана пусă йĕри-тавра хăвалама пуçлаççĕ. Ăна ярса тытаççĕ те юрлама пуçлаççĕ.*

ПАВЕЛПА ВАÇÇА. Сар хĕвел йăл-йăл кулать,
Хĕр куçĕ йăл-йăл çиçет.
Çак чиперккене курсан
Ман чĕрене хĕм тивет.
Эй, пике, сар пике!
Чуптутар-ха эс пĕрре.
Мана çеç, тек никама,
Хăвăн чи çывăх тусна.
АНЮТА. Юратăттăм киленсех
Иксĕре те харăсах,
Анчах чĕре йышанмасть
Иксĕре те харăсах.
Эй, эсир, каччăсем!
Иксĕр те питĕ матур,
Иксĕр те питĕ сатур,
Юратмашкăн майĕ пур.

*Шыв витри йăтса Нина килет.*

НИНА. Ман вали те пай хăварăр,
Эпĕ çынран катăк-и? *(Анита çине тĕллессе)*
Эпĕ унран япăх-и те
Ман юратас килмест-и?
Эй, эсĕ, çамрăклăх!
Мĕншĕн шелсĕр пултăн-ши,

Ма пит хăвăрт иртен-ши,
Хĕр чĕрине çуран-ши?
**АНЮТА.** Ой, Нина, хăтар мана вĕсенчен, çавăрса илчĕç те утăм утма та памаççĕ.
**НИНА.** Пашка, эс ытла хĕрсене суйлама юрататăн пулас. Вара çĕркĕ çеç урамра урăххипе тăмастăнччĕ-и?
**ПАВЕЛ.** Вăл çĕркĕ пулнă, кĕçĕр вара... *(Анютана хăвалать.)*
**АНЮТА** *(Вася хыçне пытанса).* Ваççа, пулăш!
**ВАÇÇА.** Ĕрĕхтермесĕр, Пашка. Анюта каламарĕ-çке чĕри кама йышăннине. Çавăнпа та халлĕхе иксĕмĕр те пĕр шайра.
НИНА. Эсир иксĕр те пĕр шайра пуль те, эпĕ вара Анютапа танлаштарсан... Ма ун çумне кăна çипçăнатăр-ха эсир, ман çине те пăхкалăр-ха.
**ВАÇÇА**. Нинаппа, ытах пăшăрханса ан ӳк-ха ĕнтĕ. Сан çине те пăхатпăр-çке.
НИНА. Аппа тесе чĕрене ан çур-ха, Ваççа! Манăн халех аппа пулса ларас килмест-ха саншăн. Е мана юратма та май çук-и?
**ВАÇÇА**. Юратма май пур, тулькկă...
НИНА. Мĕн «тулькկă»? Анюта пек чиперкке пур чухне ман çине çаврăнса пăхас килмест пуль çав.
**ВАÇÇА**. Çук, уншăн мар.
НИНА. Мĕншĕн-ха тата?
**ВАÇÇА** (*пит çăмартине кăтартса*). Малтан ак çакăнтан чуптуса ил, вара калатăп.
НИНА. Шыв ăсса пар, вара чуптăватăп.
**ВАÇÇА**. Чăнах-и? Суймастăн-и? Эп халех! *(Нинан витрине илет те пусăран шыв ăсать).*
АНЮТА *(Нина патне пырса).* Нина, мĕнлерех тапса сикре? Ку качă чĕринче тем пурах, çавăрса ил ăна.
НИНА. Кама кирлĕ пуль ман пек ватă хĕр.
АНЮТА. Эс шывне ăсса килсен, витрине килнех йăтса çитерттер.
НИНА. Хĕве ту хупса лартас мар-и? Хăйсем хăюлăх çитерейместен, пирĕн мĕн пăхса тăмалли пур, а?
АНЮТА. Ваççанна хĕве хупса хурсассăн та юрать, ун пек каччăсем сайра.
*(Ахăлтатса кулаççĕ).*
**ВАÇÇА** *(туллии витрине Нина умнее лартса).* Камран кулатăр-ха эсир, манран-и?
АНЮТА. Сан сине пăхса савăнатпăр, каччă пулса çитрĕ, тетпĕр.
**ВАÇÇА**. Халь тин симĕс мар ĕнтĕ. *(Янахне шăлса).* Кунта та мăклана пуçларĕ.
АНЮТА. Унта кăна-и?
**ВАÇÇА** *(Анютана хăваласа).* Ах, Анюта. Ярса илсе чуптăваттăм сана сывлăшсăр пулса лариччен.

ПАВЕЛ *(Васяна чарса).* Ну-ну, Ваççа, эс халь çеç теприне чуптăвасшăн марччĕ-и?
ВАÇÇА. Çапла та-ха, анчах Нинаппа...
НИНА. Татах Нинаппа тетне-ха мана?
ВАÇÇА. Çук ĕнтĕ, çук... Ниночка эсĕ манăн, Нинуля, Нинуха...
НИНА. Вăт кун пек пырать хăть. Атя, тыт витрене, Нинулясене туллии витре йăттарса йывăра кĕртмеççĕ.
ВАÇÇА. Эс малтан ăсса панăшăн парăмна тат-ха. *(Питçăмартине кăтартса).*
НИНА. Витрене кил умне çитерсе пар, вара чуптăватăп.
ВАÇÇА. Çук вара, эпир ун пек калаçса татăлманччĕ.
НИНА. Кил ĕнтĕ, кил, ыльăм.
ВАÇÇА. Эп тахçанах ыльăм мар ĕнтĕ. Эп халь хам та ыльăмсем тутарттарма пултаратăп.
НИНА. Ну Ваççа пултăр. Василий, Васька. Шăлт кушак аçи эсĕ, Ваççа.
ВАÇÇА. Эп сана паратăп кушак аçи... *(Нинана ыталаса илет те чуптавать.)* Вăт так вăт!
НИНА. Ой, чĕрем çу çинчи икерчĕ пекех сарăлса кайрĕ. Тепре чупту-ха, Ваççа. *(Пурте кулаççç.)*
ВАÇÇА. Çук ĕнтĕ. Сана çеç чуптусан Анюта çиленĕ тата. Манăн ăна та...
ПАВЕЛ *(Вася çулне пӳлсе).* Çук ĕнтĕ, Ваççа, пĕринпе çыхлантăн пулсан, теприне ан хапсăн. Пыр, сана туллии витре кĕтет.
ВАÇÇА. Юрĕ, апла, йăтса кайса парам. Атя, Нинаппа.
НИНА. Татах аппа-и-ха.!?
ВАÇÇА. Çук ĕнтĕ, çук, эп шӳтлесе çеç, Нинуля.
ПАВЕЛ. Ваççа, асту унта, хупăрласа ан хуччĕр. Пулăшмалла пулсан хама чĕн.
ВАÇÇА. Ан пăшăрхан, Пашка, санран нимпе те катăк мар эпĕ те. *(Нинапа кайма тăраççе те тăп чарăнать.)* Чим, атсем, эпĕ калама мансах кайнă. Ыран мана салтака илсе каяççĕ, кĕçĕр ăсату каçĕ пулать.
АНЮТА. Салтака?
НИНА. Сан çул çитрĕ те-и?
ПАВЕЛ. Тарăхтараççĕ каччăсене çав салтакпа. Шăп хĕр çăвăрса ямалли вăхăтра уйăрса илсе каяççĕ. Ваççа, кала-ха, салтака кайиччен пĕр хĕр пуçне те пулин савăрма ĕлкĕртĕн-и хăть? Е хĕр мĕн тути каланине туймасăрах «Урра! За Родину!» кăшкăрма каятăн-и? Нина, ачашласа ил ĕнтĕ ăна пĕрре салтака кайиччен.
НИНА. Пашка, пурте сан пек шухăшлă тетĕн-и эс?
ПАВЕЛ. Мĕн терĕм вара эпĕ çаплипех?
НИНА. Пĕрре вирлĕн кăна каласа хурăттăмччĕ те сана. Юрĕ, чĕнем мар, çынсем нумай кунта. Атя, Ваççа, кайрăмăр.
ВАÇÇА. Анюта, каçхине пыр пирĕн пата, пурте пырăр.
АНЮТА. Юрĕ.

ПАВЕЛ. Ăсататпăр сана, Ваçça, ăсататпăр, ан пăшăрхан.

*Васяпа* Нина каяççĕ.

АНЮТА. Мĕн пулнă Нинана?
ПАВЕЛ. Ват хĕрсем пурте çавăн пек вĕсем. Хăйсем çине никам та пăхманнипе ураççĕ. Юрĕ, ман ун çинчен, иксĕмĕр çинчен шутлар.
АНЮТА. Шел ăна.
ПАВЕЛ. Ма шел? Унăн хăйĕн шăпи, пирĕн хамăрăн. Вăл макăрать тесе эсĕ те куççулленесшĕн мар пуль те? Кур, мĕн чухлĕ çăлтăр тӳпере, карти-картипех, вăййа тухнă тейĕн. Куççӳлленес килет-и çакăн пек каç? Çакăн пек каç савнă хĕрпе улах вырăнта... *(Анютана çупăрлать.)*
АНЮТА. Çук, кирлĕ мар, яр, Пашка.
ПАВЕЛ. Анюта, юрататăп эпĕ сана. Эс манăн пурнăçăм! Эс манăн телейĕм!
АНЮТА. Пашка, чарăн, çынсем курма пултараççĕ.
ПАВЕЛ. Курччĕр, илтчĕр эпĕ сана юратнине. *(Кăшкăрса.)* Юрататăп эпĕ сана! Пĕтĕм халăх умĕнче те çак сăмахсене калама пултаратăп. Юрататап эпĕ сана, Анюта!!! *(Юрлаççĕ.)*
Çăлтăрсем вăййа тухсан,
Сывлăм çер çине ансан,
Кантăкран эп шăхăрсан
Вăй картине эс тухсам.
Йăл кулар-и пĕр-пĕрне,
Ыр сунар-и пĕр-пĕрне.
Эсĕ манăнах пулсан,
Эпĕ санăнах пулсан.
Илĕртет мана сăну,
Тыткăнлать мана сассу.
Чуп тăвам-и эп сана
Юратнине палăртса?
Шăпчăк юрă шăратсан,
Çĕмĕрт çеçкене ларсан
Туй тăвар-и савăнса
Тăван-йыша пуçтарса.
АНЮТА. Ăмсанакансем, кĕвĕçекенсем мăй таранах-ха. Ытла нумай хĕре куç хыватăн эсĕ, Пашка. Вĕреннĕ çĕрте те çапла-и?
ПАВЕЛ. Çав териех вĕçкĕн тесе шутлатăн-и мана? Унччен тен çапла та пулнă пуль, санпа çӳреме тытăнсан вара... Эпĕ пĕр саншăн çеç çуралнă, Анюта. Сансăр пуçне мана никам та кирлĕ мар. Чечекĕм, тин çеç çеçкене ларнă чечекĕм эсĕ манăн. *(Анютана йăтса илет.)*
АНЮТА. Ой, ӳкеретĕн, Пашка...
ПАВЕЛ. Нихăçсан та. Эпĕ сана нихăçан та хамран вĕçертмесĕп, ĕмĕр тăршшĕпех йăтса çӳрĕп сана. Юрататăп эпĕ сана!!!
АНЮТА. Ухмантейĕм эсĕ манăн...

*Павел Анютана йăтса тухса каять. Аякран Анна хăна юрри юрласа килни илтĕнет.*

АННА *(сасси)* Ксссăн-кассăн сив çил вĕрет,
Хурамана тайăлтарать.
Кунран-кунах ватлăх килет,
Çамрăклăх хыçала юлать.

*(Анна кĕрет).*

Пĕрчĕн-пĕрчĕн тырă пухса
Шурă кулач эп пĕçертĕм,
Мĕн пĕчĕкрен пăха-пăха
Чипер пике çитĕнтертĕм.

**Анюта** *(килет)* . Анне!
**Анна.** Эй, хĕрĕм, эсĕ-çке! Эх, хăналаса ячĕç те куккусем, эх, хăналарĕç те, ахалех пымарăн. Мĕн кăна çитермерĕç, мĕн кăна ĕçтермерĕç. Çавăн пек тăвансем пуррипе савăнса юрлас килет манăн, ташлас килет. Эх, кил-ха ташлар иксĕмĕр. *(Ташлама пикенет)*
**Анюта.** Намăс вĕт, анне. Çынсем курсан тем шутлĕç. Пĕтĕм яла янрататăн.
**Анна.** Мĕн намăсĕ пултăр? Вăрă вăрламан вĕт эпĕ, çынпа çапăçман. Усал япала тусан намăс пулать вăл. Ташла-ха, атя манпа.
**Анюта**. Кĕр-ха часрах пӳрте. Ĕçрĕн пулсан кĕр те выртса çывăр. Ху намăсланмасан хăть ман çинчен шутла. Кунта хамар кăна мар вĕт.
**Анна. Тата кам пур вара кунта? Ах,** Павăл-çке. Эп асăрхаман та.
**Павел.** Здравствуйте, Анна аппа.
**Анна.** Канмалли кунра аçупа аннӳне килсе курас терĕн-и? Эпĕ ак хăнана кайнăччĕ те…
**Анюта.** Анне!
**Анна.** Кĕретĕп, кĕретĕп, хĕрĕм! Эс мана ан пăх. *(Кеме тăрать, чарăнать.)* Анюта, пĕр саманта кил-ха.
**Анюта.** Мĕн тата?
**Анна.** Сан Павăлран пăрăнарах çӳресчĕ, хĕрĕм.
**Анюта.** Ма тата? Эп халь тин ача мар ĕнтĕ.
**Анна.** Килĕшмест вăл мана, вĕçкĕн вăл тата…
**Анюта.** Пурне те пĕлсе ан тăр-ха анне. Юратать вăл мана. Эпĕ те ăна…
**Анна.** Юратать, асту. Хĕрсене макăртма юрататать тенине хам та илтрĕм-ха ун пирки.
**Анюта.** Çынна пĕлмесĕр мĕнле çавăн пек калама пултаратăн эсĕ, анне?
**Анна.**Телейлĕ тăвас килет-çке манăн сана, хĕрĕм. Ман пек нушаланса пурăнмалла ан пултăрччĕ теп. Павăл вăл…
**Анюта.** Йăлăхтарсах çитертен эс мана. Кĕр-ха часрах!
**Анна.** Ӳкĕнмелле пулса ан тухтăрччĕ тетĕп сана.
**Анюта.** Ĕçме юрамасть вара çакна, тытăнать мана ăс пама. Вырт кĕрсе… Е хам каятăп*…(Анюта каять, Павел та ун хыççăн.)*

**Анна.** Эх, хĕрĕм, пурнăç тени вăл… Пĕрре йăнăшасси кăна, пĕр йăнăшсан вара… *( Пӳртне кĕрсе кайма пуçлать, Улька ятлаçнине илтсе чарăнать.)*
**Улька сасси.** Пăх-ха ăна, пӳрте кĕрсе ларнă та пер шухăшсăр ларать.
**Çтаппан сасси.** Ан янра-ха, çурăк чан.
**Улька сасси.** Мĕнле куçпа пăхса кĕртрĕн выльăхсене? Ăçта сурăх таки?
**Çтаппан сасси.** Пĕр-пĕр сурăх хыççăн ерсе кайнă пуль ĕнтĕ
**Улька сасси**. Пуш сăмах çапса ан тăр ман умра, шыра кайса!
**Ç***таппан (тухать).* Каятăп, каятăп, ан янра! Сан кăна сассу. Килесси килет пуль ĕнтĕ такун хускалнă сурăх çумĕнчен. Тьфу! Пур-ши çак тĕнчере ман арăм пек тепер тухатмăш , çук та-ши? Вăт пулать вĕт хĕрарăм.
**Анна.** Çĕр варринче ăçта çул тытрăн-ха, Çтаппан.
**Çтаппан.** Эх, Анна, эс пултăн-им-ха? Вара така киле таврăнман та, уншан та эпĕ айăплă.
**Анна.** Таврăнать, килти выльăх килех таврăнать. Ăçта кайтăр вăл? Атя лар-ха ак кунта сак çине. Пĕрре юнашар ларсах калаçар-ха.
**Çтаппан.** Мĕн çинчен калаçасшăн-ха эс тата? Капла та кун каçа пĕр-пĕрне темиçе хутчен те куратпăр иç.
**Анна.** Ĕмĕр иртсе каять теп-çке, сисмесĕрех юлатпăр.
**Çтаппан.** Иртин, ман Улька пеккипе нушаланса пурăниччен, пурăнманни…
**Анна.** Э, çук, çумри çын мĕнле пулсан та çумриех вăл. Савăнатна-пĕрле, ятлаçатна – пĕччен пурăнни мар. Халь Анютапа пурăнатпăр та, пырать. Вăл та çитĕнчĕ. Çитĕннĕ кайăк йăвара ларасшăн мар, ирĕке туртăнать. Кĕçех, ак, хăр тăлăх юлатăп.
**Çтаппан**. Ху айăплă, тепер тесен. Хам миçе арçын тупса патăм, тиркерĕн.
**Анна**. Петĕр чĕререн тухмасть-çке.
**Стаппан.** Ун çинчен кăна шутламалла марччĕ çав, ху çинчен те шутламаллаччĕ, халь ак макăран.
**Анна.** Кам макăрать, эпĕ-и? Макăратăп сана. Ма макăрас сан пек лайăх кӳршĕ пур чухне. Ак ыталаса илетĕп те пĕрре хăвна… Улькапа пурпĕр пурăнниччен пурăнманни тен вĕт.
**Çтаппан.** Эс паян тем кăмăла çĕклекеннине тутаннă пулас.
**Анна.** Тетесем патне кайса килтĕм. Хăна туса ячĕç. Ывăлĕсем таçти шуйттан шăтăкĕнче, сивĕ çĕрте пуранаççĕ. Вĕсем килнĕ те, чĕнчĕç. Киле кайма тухсан, ак, кучченеç те сумкана чиксе ячĕç. *(Сумкинчен бутылка кăларать.)*
**Çтаппан. П**ирĕн пек прастуйне ĕçсе сая каймаç икен хăйсем.
**Анна.** Пирĕнни мар тет çав, анчах пурпĕр хам юхтарнине çимтмест.
**Çтаппан.** Темле çав, тутанса пăхмасăрах калаймăн. Ют çĕршывран сан ханшу пеккине çеç илсе килмеç пуль ĕнтĕ.
**Анна.** Калатăп манăнне çитмест тесе, çитмест.

**Çтаппан.** Юре, çĕрулмине çырса парăп , ярса пар пĕр черкке.
**Анна.** Улмине сырма та вайсем чакса пырассе сав.
Çтаппан. Ак, çакна ӳпĕнтерсен, вăй мар, тем кĕрсе каять.
Анна. Сан хăрамалли çук-ха,  ывăлу çитĕнчĕ, пулăшать.
Çтаппан. Ним те калаймăн, ачи ĕç енĕпе ӳркенсе тăмасть.  Канма килсен те тем те ĕçлесе хăварма ĕлкерет. Эс тултар-ха атя, тултар. Ак, вĕренсе пĕтерсен Анютана качча илĕ те, пĕр килти пек пурăнма пуçлăпăр вара мăнуксене пăхса.
Анна. Асту, хуларан пĕр-пĕр майра çавăтса ан килтĕр.
Çтаппан. Э, майра тавраш тем парсан та кирлĕ мар. Чăваш хĕрне пурпĕр  çитекен çук. Çавăтса килмĕ-ха.
Анна. Юрĕ, ачасен телейĕшĕн пултăр эппин, тыт.
Çтаппан. Çапла çăкăр-тăврлă пурăнар. Кайрĕ.  *(Ĕçет.)*  Тĕрĕс калан иккен, Анна, ку эс юхтарнине чăн та çитмест.  Виç черкке ĕçсен те пуçа каймасть пуль ку.
Анна. Санăн арăму телейле, ĕмĕрĕ упăшка çумĕнче иртет.  Манăн вара телей нумая пымарĕ.
Çтаппан. Мĕн тăвăн, турри çапла çырă пуль.
Анна. Пĕрле çулталăк та пурăнаймарăмăр. Хăйĕн хĕрĕн сăнне те курса юлаймарĕ. Кам шутланă чипер çӳренĕ çĕрте çавăн пек инкек сиксе тухать тесе. Ун пек пуласса пĕлнĕ пулсан вăл çурта купаланă çĕре янă пулăттăм-и эп ăна? Ĕçмен те пулна вĕт хăй, ури шуса кайнипе çиччĕмĕш хутран ӳксе вилчĕ.
Çтаппан. Эс ялан аса ан ил,  хăвна йывăр ун  пек.
Анна. Куç умĕнчех тăрать, манаймастăп.
Çтаппан. Çынни чăнах та лайăхчĕ.
Анна. Эп ун умĕнче таса. Хамăн чыса варалаттармарăм, хапсăнакасем самаях пулчĕç пулин те. Эх, пĕр çаврăм юрласа ярар-ха атя.

*(Юрлаççĕ.)*

Анна. Атя, Çтаппан, тепрер йăвантарар-ха, чун лăплантăр хăть.
Улька *(тухать).* Ак, тамашша! Эс халь те кайман-и? Эп пур ăна кайрĕ-ха тесе шанса тăратап, вĕсем вара кунта ĕçкĕ пуçланă. Анна, сан мĕн, ытлашши  юхса тăрать-им унта? Хăçан пăрахатăн эс ман упăшкан карланкине шăварма? Е татах мĕнле те пулин ĕç ĕçлеттересшĕн-и? Капла та килти ĕçе ĕçлемесĕр сан патăнтан тухма пĕлми вăй хурать.
**Анна.** Эс кăна вара, Улька, ахалех калатăн. Тавах турра,  вăйне арçынран кая мар панă мана. Ку таранччен хуçалăхăма хамăн карпун çинчех йăтса пытăм.  Малашне те çын килсе туса парасса кĕтсе лармăп-ха хăш-пĕрисем пек.
**Улька.** Эс мĕн, кăна мана тĕксе калатăн-и? Эп ĕçлемесĕр пурăнатăп-и? Пăх-ха ăна мĕн калаçать.  *(Çтаппана.)* Эс мĕн, тунката пек ларатăн? Арăмна куçу умĕнче намăслантараççĕ, эс пур хута та кĕместĕн. *(Аннана.)* Эс вара… Сан пирĕн çумра нимĕнле ĕç те çук. Мĕнле

пурӑнас тетпӗр, ҫавӑн пек пурӑнатпӑр. Намӑссӑр эсӗ, ҫын упӑшкине илӗртсе пурӑнатӑн. Мӗн пур сан ҫумра? Типсе хӑрса ларнӑ ҫатӑрка ҫаппи вӗт эс!
Анна. Эс вара, апла пулсан, симӗсленсе, пӑнтӑхса, йӳҫсе ларакан ҫӳпҫе наймаки.
**Улька.** Эс манӑн хӑрах пӗҫҫе те тӑмастӑн!
Анна. Эс ман чӗрне хурине те тӑмастӑн. Хӑвӑн ҫиййӳнти кепӳ-йӗмне те ҫуса тӑханаймастӑн. Ҫумалли сахалтарах пултӑр тесе йӗмсӗрех ҫӳретӗн.
**Улька.** Ах, эс ҫапла-и-ха? Эс курнӑ-и эп йӗмсӗр ҫӳренине? Уҫса кӑтартам-и? Ак, ме, кур*. (Кепи аркине ҫӗклет.)*
Ҫтаппан. Ҫурӑк чан! Чаратӑн-и эс сассуна, ҫук-и? Ак яратап патакпа ҫурӑму урлӗ. *(Хӑмсарать.)*
Улька. Хурах! Велереҫҫӗ! Еркӗнӗпе иккӗш вӗлереҫҫӗ. Пулӑшӑр!
Ҫтаппан. Мӗн ҫухӑратӑн эсӗ, кам вӗлерет сана?
Улька. Эсӗ вӗлеретӗн, эс, еркӗнӳпе пӗрле.
**Анна** *(Улькана сумкипе ҫапса).* Эпӗ сана паратӑп еркӗн. Ак сана. Хальччен упӑшкана никампа та улӑштарса курман, вӑл пур вилнӗ ҫын умӗнче мана еркӗн тесе ҫылӑха кӗртсе тарать. Намӑссӑр эсӗ, Улька. Хамӑр пӗр-пӗрне ал лаппи ҫинчи пек пӗлсе тӑратпӑр пулин те мӗн кӑна каласа хӑртмарӑн мана.
**Улька.** Каҫар ӗнтӗ мана, Анна. Эп вӗт пӗр хӗрсе кайсан чаракран тухса каятӑп, хам мӗн каланине хам та пӗлместӗп.
Анна. Тен манӑн та пӗр саманта та пулин арҫын хулпуҫҫийӗ ҫине тайӑнса курас килет пуль. Усал шухӑшпа мар, чуна кӑшт та пулин лӑплантарас тесе. Эсӗ пур…
**Улька.** Ак ҫакӑн аллинче черкке курнипе урсак кайрӑм мар-и. Ялан пырне тӑрантаймасть. Ан йӗр, атту хам та санпа пӗрле йӗме пуҫлатӑп ак. У–у-у…
**Анна.** Эх, ыталаса илетчӗ те мана Петӗр, хӑйӗн кӑкӑрӗ ҫумне хытӑ-хытӑ чӑмӑртатчӗ. Ӗмӗрне те уйралассӑн туйӑнмастчӗ ун чухне. Пиртен те телейли никам та ҫук пек туйӑнатчӗ. Анчах…
Улька. Лӑплан, Анна, лӑплан. Пулӗ-ха телейӳ малашне.
Анна. Ӑҫтан ӗнтӗ халь тин… Юрӗ, пӳрте кӗрем.
**Улька.** Пӗччен кичем пулсан, пирӗн пата каҫса лар ҫапла.
**Анна.** Пушӑ чухне ху каҫса лар. *(Кӗрсе каять.)*
**Ҫтаппан.** Сӑмахусене пуҫпа шутласа калатӑн-и эсӗ, кутпа-и?
**Улька.** Ан чӗн! Пӗтӗмпех сана пула. Черкке курсан ним ҫинчен те шутламастӑн эсӗ. Ӗҫ-ха ак нумайрах, кӑнса выртан-ха акӑ. Ху ҫинчен шутламастӑн пулсан ман ҫинчен шутласчӗ, ывӑл ҫинче шутласчӗ. Эс вилсе выртсан мӗнле пурӑнмалла тет пирӗн?
**Ҫтаппан.** Хӑҫан ытлашшине ӗҫнӗ эпӗ? Шӑл сурсан ӗнтӗ пӗрер ҫӑвар, вар-хырӑм ыратсан... Паян ак ура йӗпеннӗ пек пулчӗ, шӑнни шала ан кайтӑр терӗм.

**Улька.** Çапла ĕнтĕ, тӳрре тухма сан хурав яланах хатĕр. Атя, кĕр пӳрте, така хыççăн кайсан... Ыран кĕтĕве тухĕ-ха.
**Çтаппан.** Эпĕ сана паçăрах каларăм хăйех таврăнать тесе. Пĕр-пĕр хускалнă сурăх хыççăн кайнă ĕнтĕ. Эс пур… *(Кĕрсе каяççĕ.)*

*Анютапа Павел килеççĕ.*

**Павел.** Анюта!
**Анюта**. Мĕн?
**Павел.** Тавтапуç сана!
**Анюта.** Тӳммеле тӳммӳсене, çынсем курма пултараççĕ.
**Павел.** Мĕн мана çынсем эсĕ юнашар чухне. Эпĕ хама юмахри пек туятăп. Çăлтарсем патне çити вĕçе хăпарнă пек туятап. Пĕтĕм çут тĕнче халь иксĕмертен кăна тытăнса тăнă пек туйăнать.
**Анюта**. Пашка, кала-ха, эсĕ мана чăнласах юрататăн-и?
**Павел**. Ыйтатăн та! Ĕненместĕн-и? Кил-ха кунта, кăтартса парам хам сана епле юратнине. *(Анютана чуптавать.)* Акă икĕ çултан диплом илетĕп те, туй тăватпăр. Вара эпĕ сана çавăтатăп та хулана илсе каятăп.
**Анюта**. Эпĕ килĕшмесен?
**Павел.** Эпĕ сана вăйпа илсе каятăп.
**Анюта**. Çав териех вăйлă-и вара эсĕ?
**Павел**. Мана юрату вăй парса тăрать. Сан пек чипер хĕр эпĕ халиччен курман. Эсĕ хулари чи хитре хĕртен те илемлĕрех. Санпа юнашар тăнă чухне мана никам умĕнче те намăс пулмасть.
**Анюта.** Сана хĕр илемĕ çеç кирлĕ-и? Унăн чунĕ мĕнлерех пулни кăсăклантармасть-и?
**Павел**. Чи кирли - сăн, келетке, урасем... *(Анюта пĕççине тытса.)*
Анюта. Ил аллуна.
**Павел** *(юрласа).*
Вăркăш çил çӳçе ухать,
Хăлхаран пăшăлттать,
Ан вĕçерт телейне тет,
Тур пӳрни сан çакă тет.
        Юмахри пек туйăнать,
        Çăтмахри пек туйăнать
        Санпа юнашар чухне,
        Куçран-куç пăхнă чухне.
Ĕнтĕ шуçăм хăпарать,
Çут уйăх та пытанать.
Вăхăт иртни сисĕнмест,
Уйрăлассăн туйăнмасть.
        Пурăнар-и килĕшсе
        Ĕмĕр-ĕмĕрех пĕрле

Пĕр-пĕрне чунтан савса,
Шăкăл-шăкăл калаçса.

**Анюта.** Пашка, кала-ха, эсĕ мана нихăçан та пăрахас çук-и?
**Павел.** Нихăçан та.
**Анюта.** Эпĕ чирлесе ӳксен е урана хуçса чăлах пулса юлсан?
**Павел.** Эпĕ пурпĕрех санпа юнашар пулăп.
**Анюта.** Эсĕ манран чипертереххине тĕл пулсан?
**Павел.** Санран чиперри никам та  пулма пултараймасть.
**Анюта.** Манăн ача пулсан?
**Павел.** Ача? Мĕнле ача? Камран?
**Анюта.** Мĕнле камран? Эсĕ манпа вылянчак шухăшпа кăна çӳретĕн-и?
**Павел.** Çук, паллах, çук, Анюта. Эпĕ кун çинчен шутламан, çавăнпа çеç каларăм.  Пире халь ача кирлĕ мар.  Мĕнле атте пулам-ха эпĕ, хам та студент çеç. Манăн çемье тăрантарма мар, хам валли те укçа çитмест.
Анюта. Эппин сана манăн хĕр чысĕ çеç кирлĕ пулнă.
**Павел.** Çук, Анюта, лăплан-ха эс, эпĕ мĕн…  Ну, мĕнле ача? Эсĕ хăвах пелен, эпĕ ача çуралсан  вĕренсе те пĕтерейместĕп. Малтан вĕренсе пĕтерем,  ĕçе вырнаçам, ура çине тĕреклĕн тăрам, кайран вара...
**Анюта.** Ман унччен мĕн тумалла тет вара?
**Павел.** Пĕлместĕп, анчах та  хамăн пулас карьерăна ачана пула пăсма пултараймастăп эпĕ. Ăна Ваçça пеккисене нимĕн те кирлĕ мар: арăм пултăр та ача пултăр… Мана вара…
**Анюта.** Ав, мĕнлерех иккен эсĕ. Эпĕ сана урăхла пуль тенĕччĕ. Суккăр иккен юрату. Кай кунтан, ман курассăм та килмест сана.
**Павел.** Анюта, мĕн калаçатăн? Эсĕ кирлĕ мана, анчах… Кĕт икĕ çул, кайран вара… Кайран куç курĕ. Халь вара...  Халь мана авланма юрамасть. Такамшăн мар-çке, хамăршăн, хамăр пуласлăхшăн тăрашатăп эпĕ.
**Анюта.** Тасал кунтан! Кураймастăп эпĕ сана! *(Кĕрсе кайма тарать, çав вăхăтра Ваçça  килет.)*
**Павел.** Анюта, тăхта! *(Анюта аллине ярса илет.)*
**Анюта.** Яр!
**Ваçça.** Пашка, эс мĕн тăватăн ăна? Яр!
**Павел** *(Ваççана).* Кай-ха эсĕ те пулин.
**Ваçça.** Мĕн кăшкăратăн эсĕ? Анюта, вăл сана кӳрентерчĕ-и?
**Анюта.** Çук,  эпĕ... Эпĕ...  *(Йĕрсе ярать.)*
**Ваçça.** Ма йĕретĕн эсĕ? Пашка, эпĕ сана куншăн…
**Павел.** Ан автанлан, кулăшла курăнан. Иксĕр те кулăшла эсир. *(Анютана.)*  Эс вара ан ухмахлан.  Çамрăклăх пĕрре çеç килет, ан ман çакна. *(Килне кĕрет.)*
**Ваçça.** Çав териех кӳрентерчĕ-и вăл сана?
**Анюта.** Çук, вăл кӳрентернипе мар,  хам ухмах эпĕ.
**Ваçça.** Мĕн терĕ вăл сана?
**Анюта.** Ан ыйт нимĕн те.
**Ваçça.** Эс йĕнине лăпкăн пăхса тăрас-и-ха?

**Анюта**. Телейсĕр хĕр эпĕ, Ваçça.
**Ваçça.** Çук, ун пек ан кала, эпир телей курма пуçлатпăр çеç-ха. Салтака кайса килем çеç малтан.
**Анюта.** Тăванусем пуçтарăнчĕç-и?
**Ваçça.** Пуçтарăннă. Атя пирĕн пата. Атту унта арçын ачасем кăна. Тата калĕç: эх, пиçмен пашалу эсĕ, Ваçça, ху салтака каятăн, хăвна ăсатса яракан пĕр хĕр те çук, тесе. Пыратăн-и?
**Анюта.** Юрĕ, кăшт тăратăп та пыратăп.
**Ваçça.** Аха, эпĕ унччен Нинана кайса чĕнем-ха. Эс нумай ан тăр вара.

*Кайма тарать, Улькапа Çтаппан тухнине курсан чарăнать.*

**Çтаппан.** Вара кунта Ваççасăр пуçне никам та çук-çке.
**Улька.** Тарчĕ- пуль ĕнтĕ. Ачан яла килме хăрамалла, хĕнесшĕн çеç тăраççĕ мĕскĕне.
**Çтаппан**. Хăй сăлтавне туса парать эппин.
**Улька.** Курайманнипе: унăн ăсне, хитрелĕхне, хĕрсем юратнипе ăмсаннипе... Ваçça, эс кунта никама та курмарăн-и?
**Ваçça**. Çук. Çтаппан тете, Улька инке, мана ыран ирех салтака илсе каяççĕ. Атьăр кĕçĕр пирĕн пата ăсату каçне.
**Çтаппан.** О-о, ун пек çĕре эпир хаваспах.
**Улька.** Вăт патька, вара эс салтака та юрахлă пултăн-и ĕнтĕ?
**Ваçça.** Çулсем иртеççĕ вĕт.
**Çтаппан.** Пыратпар, пыратпар, Ваçça.
**Ваçça.** Юрĕ, эпĕ каям-ха, манăн тата чĕнмеллисем пур. *(Каять.)*
**Çтаппан**. Юрĕ, атя эпир те тирпейленер те каяр Ваççасем патне.
**Улька.** Савăн ĕнтĕ, савăн. Сан валли татах ĕçмелли тупăнчĕ.
**Çтаппан.** Атту эпĕ виçесĕр ĕçекен çын та-ха.
**Улька**. Ан чĕн! Юрать хăть ывăлĕ ашшĕне хумарĕ.
**Çтаппан.** Сана хуни мĕн усси? Сынна ырă тăвасран хăраса пурăнатăр. Пуранар-ха, курăпăр, малашне мĕн кăтартĕ ывăлу.
**Улька**. Ăслă çынран лайăххине те кĕтме пулĕ. Сан пек ухмахран вара нимĕн лайăххине те кĕтмелли çук, сăтăр çеç санран.
**Çтаппан.** Такăлтатса тăриччен чик те пĕрер пулăштух, каяр. Хăнана пушă алăпа каяймастăн.
**Улька.** Чикмеллине ăна сансăрах пĕлеççĕ-ха, анчах пулăштуху ăшне мĕн ямала тет ман, çавна каласчĕ сан.
**Çтаппан**. Килте çук пулсан кивçене кай, Аннан пурах ĕнтĕ.
**Улька.** Каллех Анна.
**Çтаппан.** Шăлт кирлĕ чухне çук сан, ялан саппассăр тăран.
**Улька.** Хăвăн карланкушăн эсĕ çĕр тĕпĕнчен те тем тупан, халь ак ма тупмастан? Туп атя, туп.
**Çтаппан**. Эп тупатăп та тупатăп, эс ак тупса пăх.
**Улька.** Çывăрма вырмарĕ-ши тата Анна. Каçса пăхам-ха. *(Аннасем патне кеме тарать, ăна хирĕç Анюта васкаса тухать.)* Ак тамашша,

чышсах хăварчĕ.  Мĕн пулнă ку çамрăксене паян: вирхĕнсе çеç çӳреççĕ. Аннӳ пуртре-и?
**Анюта.** Пӳртре.
**Павел** *(хăйсен килĕнчен тухать.)* Анюта!

*(Анюта ним чĕнмесĕр каять.)*

## 2 картина

*Ял урамĕ.  Хăна-вĕрле шавланă сасă илтĕнет. Анюта пĕччен тăрать, ун патне Васçа пырать.*

Ваçça. Анюта, эс ма кунта пĕччен тăран? Пурте ташлаççĕ, эсĕ вара...
Анюта. Ман ташлас  килмест, Ваçça.
Ваçça. Анюта, кала-ха, эс ман çинчен кăшт та пулин шутланă-и? Ну, сан чĕрӳнте ман валли пĕр пĕчĕк вырăн та пулин пур-и?
Анюта. Эп сана ăсатма килтĕм-çке.
Ваçça. Ăсатма нумайăн килчеç-ха, анчах  чунтан ăсатса кĕтсе илекенни вара çук.
Анюта. Ан ӳпкеле хăвна, эс лайăх ача, кăмаллă. Сана савакан чăн та телейлĕ пулĕ.
Ваçça. Анчах та çук-çке вăл саваканни, çук. Тепĕр тесен, веçех хам айăплă, хĕрсене çавăрма пĕлместĕп эпĕ. Çак çулта çитсе никама та юратап тесе каласа курман.
Анюта. Каланин мĕн усси?  Теприсем калаççĕ те, каланă хыççăнах манса каяççĕ. Сăмахра ĕç тăмасть. Юратнине ăна сăмахсăрах туйма пулать. Ан васка юратап теме, кайран, унран писес пулсан, хĕрӳн кăмăлĕ хуçăлса юлĕ.
Ваçça. Çук, эпĕ санран нихăçан та писес çук. Эс ан юрат, эп сана хистеместĕп.  Анчах та ман чĕрере халлĕхе эсĕ кăна.
Анюта. Ан кала ун пек, Ваçça, эп сан юратăвна тивĕç мар.
Ваçça.  Çук, эсĕ пысăк юратăва тивĕç. Ман сана ялан телейлĕ курас килет.  Анюта, кул-ха ĕнтĕ кăшт та пулсан.  Ну...
Анюта. Эх, Ваçça, Ваçça, ырă çын эс.
Нина *(килет)* Ăçта кайса çухалтăр эсир? Ваçça, унта сана кетеççĕ, пил парасшăн.
Ваçça. Анюта, атя манпа.
Анюта. Каярахпа пыратăп.
Ваçça. Юрĕ, эпĕ кĕтетĕп.
Нина. Пыратпăр, пыратпăр, Ваçça. Эсĕ кай. *(Ваçça каять.)* Эх, пĕрре те ярас килмест ăна салтака. Ăна яриччен салтак нушине курма Пашкăна янă пулăттăм. Анюта, мĕнле эс çавна юратма пултаратăн? Санпа ташлас чухне,  кам çумне кăна çулăхмарĕ пуль кĕçĕрхи каç. Хĕрĕсем

те çав, хитре тенĕ те, пуçĕсене веçех çухатнă,  ăна куçран пăхса çеç тăраççĕ.  Эс вара кунта тăран, атя лере.
Анюта. Çук, эпĕ киле каятăп.
Нина. Мĕн пулнă вара сана? Паçăр пĕр-пĕринчен уйрăлма пĕлместĕрччĕ, халь вара...  Е вăл сана кӳрентерчĕ-и?
Анюта. Çук, ман пуç  ыратать, сив  чир ерчĕ пулас.
Нина. Каччăсене каласа парса хĕнетерем-и ăна?
Анюта. Çук, мĕн эсĕ, Нина. Вăл айăплă мар, эп хам.  Эп хам кăна… Эп чăн та чирлерĕм пулмалла. Эс мана ан пăх,  кай… Эп, эп... Телейсĕр хĕр эпĕ, Нина. *(Нинана ыталать те йĕрет.)*
Павел *(килет)* Савăнăç  вĕçленчĕ пулмалла, йĕме пуçларĕç.
Эсир те Ваççапа пĕрле салтака каясшăн мар пуль те?
Нина. Васса хыççăн салтака çеç мар, тĕнче хĕрне кайма та пулĕ, сан хыççăн вара... *(Каять.)*
Павел. Эсĕ мĕн, ăна каласа  пама та ĕлкĕртĕн-им?
Анюта. Паша, сан мана курас килмест пулсан, эпĕ сана тытса тăмастăп.
Павел. Чанах-и? Эс урăхла юрлама пуçланă иккен. Кĕввине кам, Васса ылмаштарчĕ-и?
Анюта. Эсĕ. Çыранакки те, улăштараканни те эс кăна. Ху мĕн юрланине ху та пĕлместĕн. Асар-писер илтĕнет сан юрру, ним йĕрки те çук.
Павел. О, эпир санпа чăнах та пĕр юрă юрламаллисем мар пулас. Васса сассине эсĕ тăнларах паратăн пулас. Мĕнех,  ку манăн инкек мар, сан инкекӳ. Чипер! *(Кайма тăрать)*
Анюта. Эс яланлăхах-и?
Павел. Сан мĕн, мана мĕн те пулинн калас кăмăл пур-и?
Анюта. Манăн çук, эпĕ санăн пур пуль тенĕччĕ.
Павел. Манăн каламалли пушшех те çук.
Анюта. Мăнкăмăллăху  хăвăнтан та пысăк вара санăн.
Павел. Эпĕ хамăн хака пĕлетĕп. Çавăнпа та никама та ӳкĕтлеместĕп те, пуç та çапмастăп. Чипер! *(Каять.)*
Анюта *(юрлать)*

Эсĕ килтĕн ман пата
Тыткăнларăн чунăма.
Выляса-ши эс мана
Юрататăп терĕн шантарса.

Хĕр чĕри, мĕншĕн-ши,
Ма ытла юратушăн çунтăн-ши?
Мĕншĕн-ши хĕр чĕри,
Ах, ытла юратушăн çунтăн-ши?

Ĕнентĕм эпĕ сана

Парнелерĕм чунăма.
Пăрахрăн пурпĕр мана
Шеллемерĕн çамрăк пуçăма.

Хĕр чĕри, мĕншĕн-ши,
Ма ытла юратушăн çунтăн-ши?
Мĕншĕн-ши хĕр чĕри,
Ах, ытла юратушăн çунтăн-ши.

## 2-мĕш пайĕ.
## 3 Картина

*Унтанпа икĕ çул иртнĕ. Анна ача кипкисене типме çакать. Полина Павелсен килĕнчен тухать,тунсăхлăн юрлать.*

Ăçта юрату - унта килĕшӳ,
Ăçта çухату - унта ырату.
Суран ыратни нимĕнех те мар,
Чунăм ыратни чăтмалла та мар.
Телейĕм, телей, эс ăçта çӳрен,
Савнийĕм, савни, кама эс кĕтен?
Телейĕм санпа виçесĕр терĕм,
Асап аякра тăрĕ-ха терĕм.
Ултав, ах, ултав, мĕншĕн хур турăн?
Манăн телейе мĕншĕн эс татрăн?
Кукукам, куккук, тек ан авăтсам,
Манăн хуйăха тек ан шутласам.
Самрăк пуçăмпа чунтанах савса
Юратрăм сана, эсĕ – выляса.
Суккăр юрату - ачаш киленӳ,
Вăхăчĕ çитсен – шелсĕр тавăру.
Выляса-кулса ĕмĕр иртес çук,
Суя пурнăçпа телей тупас çук.

*(Çтаппан тухать.)*

Çтаппан. Халь те килмерĕ-и?
Полина. Çук, çĕр çăтнă тейĕн.
Çтаппан. Тем пулчĕ ăна юлашки вăхăтра. Пермаях кăмăлсăр, чĕнмест, çукшăнах урса каять.
Полина. Юратсах пĕрлешрĕмĕр пек туйăнчĕ, анчах та йăнăшрăм пулас эпĕ, атте.
**Çтаппан.** Ун пек ан кала-ха, кин. Сирĕн пурнăç пуçланать кăна, майлашĕ-ха пурăна киле.

Полина. Ĕненместĕп. Эпĕ ăна кашни утăмрах кансĕрлетĕп. Ытлашши ҫын эпĕ ку килте. Хăй манпа калаҫать, куҫĕсем вара таҫта аякка тинкереҫҫĕ. Хулара пĕрле ҫулталăка яхăн пурăнтăмăр, унта кун пек марччĕ вăл. Яла килтĕмĕр те, веҫех улшăнчĕ. Пултараймастăп эпĕ кун пек пурăнма, атте.
Ҫтаппан. Ытлашши ан хуҫăл-ха, кин. Тен ĕҫĕнче мĕн те пулин пулнă пуль, ăнса пымасть пуль. Килтĕр-ха, тата хам калаҫса илĕп унпа.
Улька *(тухать).* Эсир мĕн кунта каркаланса тăратăр, сирĕн валли ĕҫ ҫук-и? Пахча-ҫимеҫсен анисем веҫех типсе ларнă. Иккĕнлетсе усăнса тăриччен, анасене шыв сапасчă хăть.
Стаппан. Чутах чĕнмесĕр юлаттăнччĕ, сап, унпа аллу йăтăнса анмасть.
Улька. Аха, ман ыратакан  пилĕкпе шыв сĕтĕрмелле, сирĕн вара пуш сăмах ҫапса тăмалла. Ҫамрăклах ĕҫрен пăрăнма намăса пĕлесчĕ хăть.
Стаппан. Хуп ҫăврна халех!
Улька. Эс ман ҫăвара хупласа ан тар. Ҫынсен арăмĕсем упăшкисем ĕҫрен килнĕ ҫĕре вĕри апат пĕҫерсе хураҫҫĕ, пӳрт-ҫурта тирпей-илем кӳреҫҫĕ, ку вара…
Полина. Пĕҫеретĕп, пахча-ҫимĕҫне те хамах шăваратăп. Мана вăрҫиччен ывăлна вăрҫасчĕ, халь те ҫук.
Улька. Ман Павăл ĕҫсĕр сулланса ҫӳремест, пурнăҫ тăвасчĕ тесе ҫӳрет. Ун пек упăшка умĕнче тепри ташласа ҫеҫ тăрĕччĕ.
Полина. Эпĕ те ташласа ҫеҫ тăнă пулăттăм, ҫемье ăшши пулнă пулсан. Халĕ вара ку килтен часрах тухса тарас килет *(Каять).*
Стаппан. Хăҫан чĕлхӳне чаран-ши эс, тьфу!
Улька. Эпех айăплă. Ним калама та ҫук ку ҫамрăксене. Хуларан сĕтĕрсе килмесен, ялта хĕр тупаймастăмăррчĕ-и Павăл валли? Кай-кай-кайĕ. Курнă-крунă та, кун пеккине курманнчĕ-ха *(керсе  каять).*

*Павел килет, вăл пуҫне коснă. Шыв витрисем йăтса Полина тухать.*

Павел. Ма ним те чĕнместĕн?
Полина. Чĕннин мĕн усси, пурпĕр илтекен сук.
Павел. Ăҫта ҫӳренине ма  ыйтмастăн?
Полина. Ыйтмасăрах паллă.
Павел. Ма вăрҫмастăн апла?
Полина. Сан та аннӳ пекех вăрҫăнас килет-и?
Павел. Ҫук, ман ĕҫсе лартас килет.
Полина. Ĕҫ, пусă типмен.
Павел. Ăнланмастăн эсĕ мана.
Полина. Эсĕ пит лайăх ăнланатăн мана. Кала-ха, ма илсе килтĕн эс мана кунта, ҫакна кăтартма-и? Хăҫанччен эс мана асаплантарса пурăнасшăн? Мĕнпе айăпа кĕтĕм эп сан умăнта? Ҫӳретĕн кунĕн – ҫĕрен таҫта, киле килсессĕн те чуна йăпатмалăх пĕр ăшă сăмах та каламастăн, ним те чĕнместĕн.

Павел. Ман кăшкăрас килет.
Полина. Юрататăп вĕт-ха эп сана, Пашка. Мĕн çичен шутлатăн эсĕ, мĕнле шухăш канăç памасть сана? Хулара кун пек марччĕ эсĕ, яла килсен веçех улшăнтăн. Мĕн канăçсăрлантарать сана? Пайла хуйхуна манпа.
Павел. Чаран!
Полина. Чунсăр çын эс, Пашка! Кураймастăп сана.
Павел. Эппин ма пурăнатăн манпа?
Полина. Эсĕ  мана нимен те курмасть, нимен те илтмест тетен-и? Пĕтĕмпех пĕлетĕп эпе*. (Павел кайма тăрать)* Ăçта каятăн?
Павел. Саншăн пурпĕр мар-и?
Полина. Çук, пурпĕр мар. Эпĕ сан арăму, эсĕ ман упăшка. Качча илтĕн пулсан, усра çын ретлĕ мана. Ан тар хăвăн килӳнтен, арăмунтан.
Павел. Пăран çул çинчен! *(Полинăна тĕксе ярать те тухса каять).*
Ах, кăйкăрăм çунатăм,
Ăш йăвуна пăрахса
Эс ăçталла вĕçен-ши,
Ют пахчари кам улмине
Эс киленсех татан-ши?

Ах, кăйкăрам çунатăм,
Ют пахчари улмийе
Мĕнле тутлă пулсан та
Вăл килти мар, килти мар
Ăна татма кирлĕ мар.

Ах, мăшăрăм-кăйкăрăм
Хăв çемйӳне пăрахса
Эс ăçталла каян-ши,
Ют йăвари кам савнине
Эс киленсех саван-ши?

Ах, мăшăрăм кăйкăрăм,
Ют йăвари савнийе
Мĕнле хитре пулсан та
Вăл çумри мар, çумри мар.
Унта кайма кирлĕ мар *(Ку сăвă авторĕ - Галина Яковлева)*

*Полина шыв ăсса кĕрсе каять, Ваçça килет, аллинче теттесем. Анюта тухать.*

Ваçça. Анюта! Анюта! Кур, мĕн чухлĕ теттесем туянтăм Сашка валли.
Анюта. Ах, Ваçça, Сашка чирлесе ӳкрĕ.
Ваçça. Чирлерĕ?
Анюта. Температури хăпарса кайрĕ, пĕлместĕп мĕн тумаллине те.
Ваçça. Тухтăр юнашарах пурăнать-çке, ма каçса чĕнместĕн?

Анюта. Ман кăтартас килмест ăна. Ма чирлесе ӳкрĕ-ши пĕреххут?
Ваçça. Ача айăплă мар. Ху чĕнмесен, хам каçса чĕнеп ăна.
Анюта. Ваçça, тен хăйех иртет?
Ваçça. Эс мĕн? Пире пула пĕчĕк ачан нушаланмалла-и? Ман иртнине, ывăлу çинчен шутла.

*Ваçça Улькасен алăкне шаккать, Улька тухать.*

Ваçça. Улька инке, Полина Владимировна килте-и?
Улька. Масара кайтăр-и? Ларатче пахчара пуçне усса, сăмсине шăлса. Мĕн пулчĕ-ха тата?
Васса. Ача чирлесе ӳкрĕ.
Улька. Вĕлтĕрен кайăкĕ-и?
Ваçça. Вĕлтĕрен кайăке мар вăл, манăн ывăл.
*(Пахчана керсе каять)*
Улька. Ненай, ненай, кам ывăлĕ вăл. Асса, кусса, хăсса пурăнаççĕ те, ме кăна ача çуратса параççĕ. Мĕнле самана пулса кайрĕ. Пĕр пĕрчĕ те вăтанмаççĕ вăт качча каймасарах хырăм йăтса çӳреме. Качча кайни пурăнать, ав, хăйне упраса. Ача пăхасран хăраса ача çуратмасăр пурăнаççĕ. Пĕрре те çын ретлĕ кин пулмарĕ. Мĕн усси ăна усраса пуранни? Ман неврăсене çисе пурăнать. Вĕсем хуларан куçса килнĕренпе пĕтĕмпех неврăллă пулса кайрăм.

*Полинапа Ваçça тухаççĕ.*

Ваçça. Часрах, Полина Владимировна, пулăшăр ăна.
Полина. Паçăрах каçса чĕнмелле пулнă, эп килтех-çкĕ.

*Аннасем патне кереcсеĕ Павел килет*

Павел. Мĕн пулнă, анне? Полина ма васкаса Аннаппасем патне каçрĕ?
Улька. Мĕн пултар? Вĕлтĕрен кайăкĕ чирлем пеки туна та, уншăн та тĕнчене çĕклеççĕ.

*Çтаппан тухать*

Павел. Анне, вĕлтĕрен кайăке мар вăл, ун пек ан кала.
Улька. Тата кам пултăр? Ваççаран, леш салтака кайичче, хырăм йăтса юлнă вĕт вăл. Халь ман мĕн, хĕр пуççăн ача çуратакана пуç таймалла мар-и тата? Юрать-ха, Ваççи парахмасть, йышанать, атту пулсан вăл вĕлтĕрен кайăкне...
Çтаппан. Эп сана паратăп вĕлтĕрен кайăкĕ! Халех пӳрте кĕрсе çухал! Çын инкекне кура савăнса тăратăр. Тепри пулсан хĕрхенсе пулăшмасан та, ăш сăмах калĕччĕ, эс пур... Сире пула хам намăсланатăп.

Улька. Ма манăн намăсланмалла тет вара? Эпĕ мĕн хĕр пуссăн ача çуратнă-и? Пирĕн Павăл Ваççа пек кашни кĕтесре вăрлăх акса хăварнă-и?
Çтаппан. Санпа мĕн калаçмалли. Сăмсу умĕнче мĕн пулса иртнине курмастăн та эсĕ. Тасал-ха хăть куç умĕнчен. *(Улкана чышса кртсе ярать).* Çакăн пек хирĕçсе пурăнсах ĕмĕр иртет ентĕ. Сан та пурнăçу çавах. Арăмупа пĕрре те шăкăл-шăкăл калаçни çук. Мĕн пĕлсе качча илсе килтĕн эсĕ ăна? Качча илсе килтĕн пулсан, ма писен унран?
Павел. Йăнăш турăм эпĕ, атте, пелетĕпĕ.
Çтаппан. Пĕлетĕп... Малтан мĕн шутларăн? Пăхлă пушă кирлĕ сире аннӳпе иксĕре те.
Павел. Маларах кирлĕ пулнă сан пушшу. Халь тин мĕн тăвас-ха ĕнтĕ, кала.
Çтаппан. Ухмах эсĕ, акă кам. Çавăн пек хĕре тиркерĕн… Ых! Лутăркаса тăкса тепре кăна унăттăмччĕ те сана май пулсан. Юрĕ, машинуна тапрат, тен ачине пульницана илсе каймалла пулать.

*Павел тухса каять.*

Анна. Эй, ырă турă çеç пулăштăр ман тĕпренчĕкĕме.
Çтаппан. Çав тери йывăр-им?
Анна. Пашкаса çеç выртать, йĕме те вăйĕ çук пулас.
Çтаппан. Кине пульницара мухтаççе, сыватĕ-ха.
Анна. Вăл чирлесе ӳксен, чĕре çурăлсах тухать. Айванрах çуралчĕ çав. Хырăмлă чухне амăше хуйхăрнипе-и. Телей курма çуратман ĕнтĕ пире.
Çтаппан. Ав сав Павăла çапса кăна пăрахăттăм та... Йĕркеллĕ пурăннă çĕртех тем туса хучĕ. Халь хайĕн йăнăшне туйса илчĕ пуль те, кая юлчĕ.
Анна. Чунсăр çын вăл. Анютине те мĕн чухлĕ каларăм унран пăрăнса çӳре тесе. Хитрелĕхе курсан ытти çинчен шутлать-и хĕрупраç.

*Нина килет, вал тем йăтнă.*

Нина. Ырă каç сире. Эп килтĕм-ха. Эсир мĕн салхуллă тăратăр? Тем пулмарĕ пулĕ те? Нимĕншĕн те ан хуйхăрăр, хам пек пулăр. Эпĕ хуйхă пулсан та кулса çеç çӳретĕп. Мĕн йĕрсе ларса çынна савăнтармалли пур. Вĕсем çавна кăна кĕтесе тăраççĕ. Вак тĕвек пусма татăкĕсем пурчче те, Сашук вали кĕпесем çĕлесе парам-ха терĕм. *(Ача тумтирĕсем кăларать.)*
Анна. Тертленмелле марччĕ, ун капла та тăхăнмалли нумай.
Нина. Кусем манран, пулас хĕрес амăшĕнчен. Шыва кĕртме илсе каймарăр-и-ха. Астăвăр, хĕрес амăшне никама та ан тăвăр, хам пулатăп. Манăн та ывăл пулать вара. Ан тив, хресной ывăл çеç пултăр,

анчах пурпӗрех манӑн ывӑл пулать. Шутсӑр ачасене юрататӑп. Эх, хамӑн та качча каясчӗ те ҫав.
Стаппан. Кайӑн-ха, эс ҫамрӑк вӗт-ха.
Нина. Ватӑлатӑп сав, вӑтӑра ҫывхаратӑп. Ай, тепӗр тесен, мӗн хуйхӑрса лармалли? Теприсем хӗрӗхре те ача ҫуратаҫҫӗ. Качча каяймасан пӗр каҫа пӗр-пӗр арҫын тупӑнӗ-ха теп. *(Ҫтаппана тӗксе илет).* Ача ҫуратӑп та вара, малашнехишӗн нимӗн чухлӗ те хуйхӑрмастӑп. Ӳссе ҫитӗнсен хама пӑхакан пулать. Эпӗ ӑна кашни кун ҫӗнӗ кӗпе ҫӗлесе тӑхӑнтартӑп. Лавкка япалисене юратмастӑп эпӗ. Ҫире лайӑх выртмаҫҫӗ вӗсем тата хаклӑ. Юре, эпӗ Сашук патне кӗрем-ха.
Анна. Кӗр, чирленӗччӗ-ха вӑл.
Нина. И-и-и, мӗскӗн, ҫавӑн пек маттуркан та чирлесе выртмалла-и вара...

*Нинапа Анна кӗрсе каяҫҫӗ. Улька тухать.*

Улька. Вилсех каяҫҫӗ вара ҫав вӗлтӗрен кайӑкӗшӗн. Тытамакӗ те сӗтӗрӗнсе килнӗ вӗт-ха.
Ҫтаппан. Сана мӗн ӗҫ сын ҫумӗнче.
Улька. Ҫитӗ сана та ҫын пӳртне хуралласа. Вӗлтӗрн кайӑкне пула килти ӗҫсем ҫинчен мансах кайрӑр. Камӑн ӗҫлесе пӗтермелле вӗсене? Эп мӗн кунта сире валли тарҫӑ-им?
Ҫтаппан *(хулӑ илсе).* Ак ҫакна куратӑн-и? Халех тутантарса кӑтартатӑп сана. *(Улькана хӑмсарса кӗрсе каяҫҫӗ.)*

*Полинапа Анюта тухаҫҫӗ.*

Анюта. Тавах сире.
Полина. Халь тин хӑрамалли ҫук. Эп каланӑ пек тӑвӑр та, чирӗ иртсе каять. Каярахпа эпӗ тепре каҫса пӑхатӑп.
Павел *(килет).* Эпӗ машина тапратрӑм ачана больницана илсе каймалла пулӗ тесе.
Анюта. Кирле мар, ӑна ҫӑмӑлрах *(Кӗрсе каять.)*
Полина. Паша, сан мана нимӗн те калас килмест-и?
Павел. Мӗн пирки эс?
Полина. Мӗн пирки? Вӑл тата ыйтса тарать-ха! Мӗн туса хутӑн эсӗ, мӗн туса хутӑн? *(Павела ҫупа- ҫупа ярать те кӗрсе каять.)*

*Павел пуҫне усса ларать, хӑй валли вырӑн тупаймасӑр ҫӳрет. Анюта тухать*

Павел. Анюта!
Анюта. Ан ҫывхар!
Павел. Каҫар мана, Анюта.

Анюта. Касар? Эсӗ каҫару ыйтма та пӗлетен-и? Ăҫта вара сан мăнкăмăллăху? Пуҫна усрăн та-и? Ҫук, каҫармастăп, ан та кӗт.
Павел. Эп йăнăш турăм.
Анюта. Ытла вăраха кайсан туйса илтӗн эс ху йăнăш тунине. Малтан мана асаплантартăн, халь арăмна. Курайместăп эпӗ сана.
Павел. Вăрҫ, хӗне, ҫап мана, Анюта. Эп манаймастăп сана.
Анюта. Ҫук, Пашка, сан хăвăн пурнăҫ, манăн хамăн.  Маларах таврăнмаллаччӗ. Халь тин эсӗ мана кирлӗ мар.
Павел. Никама та кирлӗ мар эпӗ халь.
Анюта. Эс ху суйласа илтӗн ҫакнашкал шăпа. Манăн ача ӳсет. Ăна сан пек атте кирлӗ мар.
Павел. Ухмах эпӗ, ухмах.
Анюта. Юратрăм эп сана, кӗтрӗм. Эс килтен, анчах та пӗччен мар, арăмпа. Ăна та ухмах вырăнне хуратăн-и? Эп куртăм-ҫке, вăл Сашкăна курсан чутах тӳнсе каятчӗ. Каснă лартнă эсӗ вăл. Халь кай хăвăн ҫулупа, пире ан кансӗрле.
Павел. Ан хăвала мана. Эпир пӗр-пӗрне кирлӗ, эпир ачана кирлӗ.
Анюта. Тинех ун ҫинчен аса  илтӗн иккен.  Малтан, авланиччен, мӗн шутласа пурăннă вара эсӗ?  Паллах, хитре хӗрсемпе ҫыхланнă чух, хырăмлă хӗр ҫинчен шутлас килмест пуль ҫав. Эп, ухмахскер, сана кашни кун кӗтрӗм, кашни каҫ кӗтрӗм, эс вара…  Пӗлетӗн-и, мӗн чухлӗ куҫҫуль тăкнă эпӗ ҫавăн хыҫҫăн?  Ача ҫуралчӗ. Тен роддома пырӗ, хăйӗн йăнăшне ăнланӗ терӗм. Авланать тенине илтсен вара чутах ухмаха ереттӗм.  Вилес шухăш та пурччӗ, ачана шеллерӗм. Ача ӳссе ҫите, ăнланакан пулӗ. Мӗн калăп эп ăна атте ăҫта тесен?
Павел. Эс чăнласах Ваҫҫана качча тухатăн-и?
Анюта. Чăнласах.
Павел. Ан хытлан ун пек Анюта. Юрататăп эпӗ сана, манман эпӗ сана. Вылянчăк  шухăшсем пăтратрӗҫ мана.
Анюта. Ытла та маттурланса кайнă-ҫке эсӗ.  Пӗр харăс икӗ арăмпа пурăнасшăн  мар-и тата? Ҫук, Пашка, санпах телейе тупас тесе ӗмӗтленнӗччӗ, пулмарӗ. Чипер! *(Кӗме тăрать)*
Павел. Тăхта.
Анюта. Ан чар мана.
Павел. Анюта...

*Пӳртрен Ваҫҫа тухать*

Ваҫҫа. Мӗн кăшкăран эсӗ. Анюта, вăл каллех сан ҫумна ҫулăхать-и? Мӗн кирлӗ сана, ак ҫакă-и! *(Павела ҫапса ярать.)* Кай кунтан, тек нихăҫан та ман куҫ тӗлне ан пулнă пултăр.  Курам кăна... *(Хăмсарать).*
Анюта. Ваҫҫа, ҫитӗ, тек кирлӗ мар.
Ваҫҫа. Ҫитет унран мăшкăл курса. Ҫухал! *(Павел кӗрсе каять.)* *(Анютана.)* Каҫар мана, вăл урăхла ăнланмасть. *(Анюта килне кӗме тăрать).*  Анюта, ан васка-ха, калаҫар.
Анюта. Ачана нумайлăха пăрахса хăварас килмест ман,  Ваҫҫа.

Ваçça. Вăл çывăрса кайрĕ.
Анюта. Тинех иккен.
Ваçça. Анюта, эпĕ леш çуртне кайса пăхрăм. Паллах унта юсамаллисем нумай, анчах пурăнма пулать. Хакĕ пирки те калаçса таталтăм. Пĕрлешетпĕр те тӳрех унта пурăнма куçатпăр.
Анюта. Ытла ан васкат-ха эсĕ мана, Ваçça.
Ваçça. Мĕн кĕтмелли пур? Эпĕ сана юрататăп. Манăн часрах санпа пулас килет, санпа çеç тата Сашкăпа. Çĕнĕ çемье, çĕнĕ пурнăç тăватпăр. Анюта, тинех эпир иккĕн çеç, эсĕ тата эпĕ. Сан куçусем, санăн туту, санăн куллу – вĕсем пĕтемпех манăн пулаççĕ, çапла-и?
Анюта. Санăн.
Ваçça. Хăçан туй тăватпăр?
Анюта. Нимле туй та кирлĕ мар.
Ваçça. Мĕнле кирлĕ мар? Эпир хĕрпе каччă-çке. Эп те авланман, эс те качча кайман.
Анюта. Ачаллă хĕре килĕшмест туйпа качча кайни.
Ваçça. Юратсассăн килĕшет.
Анюта. Туйпа пĕрлешетпĕр-и, туйсăр-и, теллей унран килмест-çке. Эпĕ те шур пĕркенчĕк айĕнче ларма ĕмĕтленеттĕм, эпĕ те шавлă туйпах качча кайма шутлаттăм. Хăратăп эпе Ваçça, татах улталанасран хăратăп. Ман ача пур. Эсĕ ăна пурпĕр хăвăн ачуна юратнă пек юратас çук-çке.
Ваçça. Анюта, ан калаç кирлĕ мара. Вăл манăн ывăл, манăнах пулать. Эпе ăна юрататăп, вăл та мана юратĕ. Эпир телейлĕ пулатпăр, Анюта.
Анюта. Аçупа аннӳ... Вĕсем мĕн теççĕ?
Ваçça. Вĕсем ман маттурккасем. Эп вĕсемпе калаçнă, вĕсем мана хирĕç пырас çук.
Анюта. Эсĕ çамрăк, вăйлă, хитре. Мĕншĕн урăх хĕр тупса ямастăн-х, мĕншĕн ачаллă хĕр патне çӳретĕн? Сахал-им таврара чиперккесем.
Ваçça. Мана сансăр пуçне никам та кирлĕ мар.
Анюта. Кайран, ак, пĕрлешсен, ху йăнăшна ăнланса илĕн те, пире, ачапа иксĕмĕре те курайми пулăн.
Васса. Анюта, ан кала кирлĕ мара. Эп сана салтака кайиччненех юрататтăм. Салтакра чухне те сан çичен кăна шутлаттăм. Ан хăра, эп Пашка пек пулмăп.

*Павел килĕнчен васкаса тухать те пахчине кĕрсе каять.*

Анюта. Ваçça, каçар мана, эп пӳрте кĕретĕп. *(Кĕрсе каять.)*
Ваçça. Анюта!

*Ваçça кайма тарать, пӳртрен Нина тухать.*

Нина. Ваçça, тăхта-ха.
Ваçça. Мĕн тата, Нина?
Нина. Ман калаçмалли пур санпа.

Ваçça. Манпа?
Нина. Çапла, санпа, санпа кăна, тек никампа тамар. Кунта никам та çук-и, пире никам та итлемест-и?
Ваçça. Мĕн пулнă санă, Нина, камран хăратăн эсĕ?
Нина. Çынсенчен, ăнман çынсенчен. Эп ухмаха тухнă пек курăнатăп-и? Эп ухмаха тухман, эп сан пекех ăслă-тăнлă.
Ваçça. Нина, эп тем ăнланаймастăп-ха сана.
Нина. Пурнăç пăтранать, çамрăклăх иртет. Çулталăк, унтаниккĕ, виççĕ, пиллĕк, вуннă, çирĕм, вăтăр... Пĕлетĕн-и, Ваçça, вăтăр çул. Вăтăр çул мĕне пĕлтернине ăнланатăн-и эсĕ? Çук, эсир, арçынсем, кăна ăнланмастăр.
Ваçça. Эпĕ чăн та ăнланмастăп-ха сана, Нина. Тем калаçан эс.
Нина *(Ваçça умне чĕркуçленсе ларать.)* Пулăш-ха мана Ваçça, пулăш.
Ваçça. Нина, эсĕ мĕн? Тăр, пулăшатăп сана, паллах пулăшатăп, кала мĕнпе пулăшмалла, пулăшатăп.
Нина. Эпĕ ку таранччен сан пек ăша кăмăлла каччă тĕл пулман. Манăн сана çеç хамăн чуна уçса парас килет. Эсĕ çеç мана тĕрĕс ăнланма пултарнăн туйанать. Эпĕ ку шухăша никама та уçса паман. Кун пирки никама та ан пĕлтĕр, иксĕмĕр çеç, Ваçça. Ан хирĕçле, тархасшăн, пулăш мана.
Ваçça. Каларăм-çке сана пулăшатăп тесе, лăплан. Эсĕ сив чирпе чирленĕ пекех чĕтретĕн. Мĕнпе пулăшмалла сана: вутă татса памалла-и, улма ани çырса памалла-и, килкартинче мĕн те пулин юсамалла-и?
Нина. Кала-ха, Ваçça, эп санпа пĕр çулта пулнă пулсан, эсĕ юратнă пулăттăн-и мана?
Ваçça. Ма ун пек калатăн? Нина, эсĕ хăвна вата тесе шутлатăн-и?
Нина. Çук, эс кала малтан: юратма пулать-и мана е çук?
Ваçça. Паллах. Эсĕ сăпайлă, кăмăлла, ĕçчен. Салтака кайиччен паллах эп санран самай кĕçĕн курăнаттăм, халĕ вара... Салтак пурнăçĕ каччăсене хăвăрт арçын шутне кĕртет. Сан пек хĕрсене те юратмасан вара.
Нина. Эп юратса курман. Çук, юратса та курна, каччă çеç пулман. Çук, мĕн калаçатăп-ха эпĕ. Каччи те пулнă, анчах вăл эпĕ ăна юратнине пĕлмен. Эп хам тĕллĕн çеç, ăшра, никама систермесĕр. Аттепе аннене пытарнăранпах эпĕ пĕччен. Вĕсем аварине çакланман пулсан тен ман пурнăç та урăхла пулатчĕ. Ача чухне манпа ытти ачасем тытамак тесе вылямасчĕç. Вылянă чухне те аттепе анне куç умне тухса тăратчĕç те, хытă йĕрсе яраттăм. Çавăнпах мана ачасем тытамак теме пуçларĕç. Тытса пăрахнă пекех йĕретĕн тетчĕç. Хĕр пулса çитсен вуçех манран пăрăнма пуçларĕç. Мана никам та юратман, хĕрсем те, каччăсем те. Çаплах ĕмĕр иртет. Пĕччен, никамсăр хăрушă-çке пурăнма, Ваçça. Кама шанса пурăнмалла? Йывăрлăх килсен камран пулăшу ыйтмалла? Кукамай та ватă. Вăл та

вилсен пĕр çывăх  çын та юлмасть çак çĕр çинче. Тархасшăн пулаш мана, Ваççа.
Ваççа. Мĕнпе? Кала эс мĕнпе пулăшмалла сана?
Нина. Мана ача кирлĕ, хамăн ача, чĕре айĕнче ӳстернĕ ача кирлĕ.
Ваççа. Ача?
Нина. Эпĕ ăна пăхса ӳстерĕп, хамăн кăкăра ĕмĕртĕп, çĕр çывăрмасăр ăна чир-чĕртен упрăп, çын тăвăп. Ватлăх кунра вăл мана пăхĕ. Эпĕ хамăн пурнăçа пĕтĕмпех ăна парăп. Мана ача кирлĕ, Ваççа, Анютăнни пекех пĕчĕк ача. Санран ача кирлĕ.
Ваççа. Манран?
Нина. Эсĕ ан хăра, никам та пĕлмĕ кун пирки. Малтан илĕрттет те, кайран ирĕксĕр хăй çине авлантарать тесе ан шутла. Мана эсĕ пĕр каçа кăна кирлĕ.  Манăн хамăн ачана та сан пек кăмăллăскер курас килет.  Пашка евĕрри кирлĕ мар мана. Илтетĕн-и эсĕ мана, Ваççа.
Ваççа. Илтетĕп-те-ха... Эс паян, каçар та, чăн та ухмаха ернĕ пекех Кайран ӳкĕнен вĕт ху.  Çук, эп пултараймастап, хăвах пĕлетĕн-çке, манăн Анюта пур, Сашка.
Нина. Эп ухмаха ермен, эп нихăçанхинчен те ăсла-тăнлă.  Вăтăра çитсессĕн ӳкĕнесси çинчен шутламастăн ăна.  Эпĕ ватă хĕр, никама та кирлĕ пулман ватă хер. Мана ача кирлĕ. Эсир Анютăпах пулăр, сирĕн хушша кĕместĕп эпĕ.
Ваççа. Çук, Нина, эп ун пек тума пултараймастăп.
Нина. Эсĕ те манран пăрăнатăн, пурте манран пăрăнаççĕ, пурте мана тытамак теççĕ. Хампа калаçнă чухне çеç ятран чĕнеççĕ.  Турăçам, ма çутă кун патăн-ши мана? *(Йĕрет.)*
Ваççа. Нина, лăплан-ха, тархасшăн.
Нина. Кай, эсĕ хăравçă.

*Нина йĕрсе тухса каять. Ваççа тепĕр енне тухса кайма тăрать. Пысăк сумка йăтнă Полина тухать.*

Полина. Ваççа, тăхта-ха пулăш-ха мана.
Ваççа. Мĕн пулнă сире паян пурне те, мĕн çыпçăнатăр пурте ман çума? Эп мĕн сирĕн валли кунта ăратлă вăкар-им?
Полина. Сан мотоцикл пур вĕт. Леçсе яр-ха мана аслă çул çине çити. Çуран кайсан юлашки автобуса ĕлкĕрейместĕп.
Ваççа. Пашка леçмест-и? Ун машина пур вĕт.
Полина. Леçмест.
Ваççа. Каçа хирĕç ăçта каятăр тата?
Полина. Манăн текех кунта пĕр минут та тăрас килмест. Яланлăхах каятăп эп кунтан. Йăнăш лекнĕ эпĕ ку çурта. Никама та кирле мар эпĕ. Юратмасăр ан авлан Ваççа. Хитре сăнлине ан шыра, чунĕ хитре пултăр пулас мăшăрун. Леçетĕн-и?
Ваççа. Васкаса ан кайăр, Полина Владимировна, паян урлă пирлĕ пулатăр, ыран...

Полина. Çук, Ваççа, çук текех пирĕн çемйе. Леç тархасшăн. Ман япаласем нумай мар, çак сумка çеç, ыттисене илме пиччесене яратăп.
Ваççа. Юрĕ эппин, мотоцикла тапратса килетĕп.
Полина *(Аннасен пÿртĕ енне).*Анюта! Анюта! Тух-ха!
Анюта. Кам унта? *(Тухать.)*
Полина. Кил-ха самантлăха. Ывăлу мĕнле, температури чакрĕ-и?
Анюта. Чакрĕ. Тавах сирĕ.
Полина. Кала-ха, эсĕ юратнă-и Пашкăна?
Анюта Çук, мĕн эсир, эпĕ...
Полина. Яла килсен хăлхана пырса кĕнĕчче сан ачу пирки сăмах, анчах ĕненес килмерĕ. Паян вара Сашкăна курсассăнах ăнлантăм ун ашшĕ кам иккенне.  Лайăх ача вăл сан, чунĕпе çеç ашшĕ пек ан пултăр.  Йĕксĕк вĕт-ха вăл, йĕксĕк. Хăйĕн ялĕнче савниййĕ пулнă, ачи, вăл тата мана çакăнта качча илсе килчĕ. Кураймастăп ăна.
Анюта. Эпĕ айăплă мар, çамрăк чухне йăнăшасси хать камăн та пулать.
Полина. Санăн телейне таптани çитмест, манăнне те аркатрĕ. Хĕрсене çаварма чĕлхе панă ăна, сăн та.  Сăнĕ вырăнне чунне хитререх туса ярасчĕ.  Юрать-ха турри ача памарĕ мана унран.  Халь тин мана кунта никам та тытса тăмасть. Сывă пул. Эпĕ кунтан яланлăхах каятăп.
Анюта. Ăçта?
Полина. Малтан аттепе анне патне, кайран куç курĕ унта.
Анюта. Ан кайăр.
Полина. Вăл юратать сана.  Шухăшĕсем те сан çинче кăна ахăртнех. Эс те юратмасăрах унран ача çуратас темен пулĕ.  Унпа пĕрле пулсан телейлĕ пулăр. *(Каять.)*
Анюта. Çук, çук, мĕн эсир. Ан кайăр! Мĕн пулса тухать-ха капла? Анне! Сашка! *(Кĕрсе каять)*
Улька *(тухать)* Кай, кай, таси паха! Хăрататăп терĕн пуль те, хăраканнисем мар кунта. Сан пек арăма мĕн тума усрамалли пур? Мĕн чухлĕ пурăнса та ача туса памарĕ те, хĕрарăм çавăн пек пулать-и? Тьфу, кай, тĕсĕ-маси те ан пултăр вăл хĕрарăмăн пирĕн килте.
Çтаппан *(тухать).* Эс мĕн каллех янратăн? Кама хăвалан?
Улька. Ларса йĕрес  мар-и тата  хĕсĕр кĕсре тухса кайрĕ тесе? Кайтăр, ун пек арăма тахçанах пушăпа хăваласа ямалла хам пулсан
Çтаппан. Чарăн! Эп сана хăвна пушă тутантаратăп çиччас.  Кин тухса кайнипе савăнса тăрать. Кин! Павăл аста?
Улка. Эп ăçтан пĕлем, эп мĕн, унăн арăмĕ-и?
Çтаппан. Çавăрмалла кине часрах. Павăл!
Улька. Ан та шутла, кĕртместĕп, алăк урати урлă та каçармастăп. Пире намăс кăтартап терĕ пуль те, намăсĕ хăйне пултăр.
Çтаппан. Чарăн тенĕ сана. *(Павел пахчаран тухать)*
Мĕн туса хутăн эсĕ? Ма хăваласа ятăн кине?

Павел. Атте, пирĕн хушша ан кĕр. Хăвăра пĕлĕр. Ĕмĕр тăршшĕпе сирĕн пек харкашса пурăниччен...
Улька. Кайтăр, тĕнчере хĕр пĕтмен, урăххине тупатпăр. Кай! Кай!
Çтаппан. Эп сана çиччас урăххине тупса паратăп. *(Улькана хăвалать).*
Улька. Хурах, хурах! Мана мар, кинне хĕнемелле. Ав еркĕнĕ пулнă унăн. Кур, Ваççа çумне мĕнлерех хăпарса ларчĕ. Ах, патька, ыталасах илчĕ вĕт. Ах, курнă-курнă та кун пеккине курманччĕ-ха. Тьфу, намăссăр, упăшки пур çинче еркĕн тупса яна вăл. Ах, намăссăр, ах, намăссăр. Кай! Кай!
Павел. Анне, чарăн.
Улька. Мана чарса ан тăр. Арăмна чармаллаччĕ. Эс йăваш пулнипе иртĕхнĕ вăл. Качча илсенех алла илмелле пулнă ăна. Кай-кай, курнă курнă та кун пек намăс курманччĕ-ха. Пит çăмартисем те вут пек пĕçере пуçларĕç. Ах, пуçа ăçта кайса чикем-ши? Пĕтĕм неврăсем ташша тухрĕç пулмалла.

## 4 картина.

Анюта килĕнчен тухать, ун хыççăн Нина, вĕсем капăр тумланнă.

Нина. Анюта, мĕн пулчĕ тата сана?
Анюта. Пуç çаврăнать, ăш пăтранать.
Нина. Пӳртре чăнах та пăчă çав.
Анюта. Çук, пăчă пулнипе мар. Тем пăтранатпăр эпир, хамăрпа пĕрле ыттисене те пăтрататпăр.
Нина. Халь тин пуçна ан ус. Теприн Ваççана качча кайнишĕн савăнса кăна тăрĕччĕ, эсĕ пур...
Анюта. Ваççашăн пăшăрханмастăп-ха эпĕ, вăл шанчăклă çын. Чĕре вырăнта мар манăн, Нина.
Нина. Тата мĕн канăç памасть вара сана?

*Улькасен патенчен Пвал тухать.*

Павел. Ырă кун. Анюта, саламлатăп сана. Эс паян качча каятăн теççĕ .
Нина. Вара мĕн, сана мĕн ĕç?
Павел. Çаплах манăн ĕç çук. Кашни хăйĕн шăпипе хăй хуçа. Анчах теприн уменче яваплă пуличчен, малашлăха кăшт тинкерни пăсăклă мар пуль теп.
Анюта. Кам кам та, эсĕ малашлăх çинчен калаçни мана лĕклентерет анчах. Яваплăха ним чухлĕ те туймасăр, тепĕр çын шăпине ним вырăнне хумасăр, вылянчăк ĕмĕт-шухăшпа пурăнанкан çын ăна пула куссульпе çăвăннă çынран кулса тăрать. Кам вара эсĕ кун хыççăн? Хур куракан хур курсах вилтĕр, телейпе чыхăнни телейрен татăклă ан тăтăр тетĕн-и? Çук вара, этем тени кашни телейе тивĕç. Сан пек яваплăха туймасăр мар, ăна туйса, теприпе пайласа тивĕçлĕн утса

тухăп эп хамăн ĕмĕре. Никам мана чарайме! Эс тĕрĕс каларăн, хам шăпапа эп хам хуçа.
Павел. Ача шăпипе вара.
Анюта. Ман ун çичен. Сана ун шăпи халиччен интереслентермен.
Нина *(Павела)* Ма тухрăн-ха эсĕ? Кай! Анюта, атя пурте.
Павел. Йăнăшасси кашнинпех пулать. Ĕçне тунă чухне никам та йăнăшап тесе тумасть. Кайран чавса çывах та, çыртма çук. Эп сана ӳкĕтлеме тухман. Ху пĕлнĕ пек ту, анчах тепĕр йăнăш тăвиччен малтан тунă йăнăша тӳрлетсен лайăхран пулмĕ-и?
Анюта. Çук, ан кала тек нимĕн те. Эпĕ сана тек итлесе тăма пултараймастăп. Веçех пăтратрăн: ăçта телей, ăçта инкек - телли-палли те çук. Пашка, ма асаплантаран эсĕ мана?
Павел. Эпĕ юрататăп сана.
НИНА *(пӳлсе).* Çук, ун патне ан çывхар. Анюта, кĕр халех пӳрте, кĕçех туй килет.
Анюта. Мĕн чухлĕ куççуль тăкман пуль эп сана пула, анчах та пĕр чĕптĕм çилĕ те юлмарĕ.  Куç умнеçе тухса тăратăн та, тарăхни веçех иртсе каять.
Нина. Анюта, эс пуçна çухатнă. Анна аппа!
Анюта. Хăв аякра пулсан та, сан ачуна ытама илеттĕм те, хама телейлĕн туса илеттĕм.
Анна *(килет).* Мĕн хытланатăр эсир, каллех намăсăра çухатрăр-и? Ах, Павăл, хăçан нушалантарма пăрахатăн эсĕ пире?
Павел. Каçар мана,  Анна  аппа.

*Ача йĕнĕ сасă илтĕнет.*

Нина. Сашка йĕрет *(тухса каять).*
Павел. Анюта, туй киличчен кăтарт мана ачана.

Анюта Павел çине пăхса илет те кĕрсе каять,  Павел та ун хыççăн.
Улькапа Стапан тухаççĕ.

Улька. Вăт, патька. Пăх-ха мĕскер хăтланаççĕ.  Арăмĕ тухса кайма ĕлкĕреймере, ывăла илĕртме те пуçларĕç. Вĕлтĕрен кайăкĕ кăна çитменнчĕ ĕнтĕ пире. Анна, ăçта сирĕн намăсăр?
Анна. Хăçан чаран эс чĕлхӳне, Улька? Çылăхсăр чуна ма çылăха кĕртетĕн.  Сан мăнуку вĕт вăл, Павăл ачи.
Улька. Мĕ-ĕн? Çав вĕлтĕрен кайăкĕ Павăл ачи-и?
Анна. Суккăр иккен эсĕ. Миçе курман пуль ху ăна, çавăнта та хăвăн юнна палласа илейменрĕн.
Улька. Вăт пурнăç… *(Çтаппана.)* Вара сан калама юраман-и мана?
Çтаппан. Суккăр çыннăн куçне сăмахпа уçаймăн.

*Туй çывхарнă сасă. Ваçça килет.*

Ваçça. Салам, Анна аппа, эпир хĕр илме килтĕмĕр. Анюта хатăр пуль.
Анна. Ваçça, тăхта-ха унта кĕме, унта мĕн-ха.
Ваçça. Мĕн, хĕр капăрланса çитеймен-и?
Анна. Ваçça, унта Павăл.
Ваçça. Павăл.

*Пӳртрен Анютапа Павел тухаççĕ*

Анюта. Ваçça, каçар мана.  Эп сана качча тухаймастăп.
Ваçça. Мĕнле апла? Кам сан пуçна тепĕр майлă çаврăнчĕ, Пашка-и? Ма ĕненетĕн ăна, вăл сана пĕрре пăрахрĕ-çке.
Анюта. Эпĕ юрататăп ăна.
Ваçça. Эх, Анюта, тивĕçлĕ пулаймарăм иккен эп сан юратăвна. Анчах та, Пашка, асту, Анютана кӳрентерес пулсан... Эс мана пĕлен.
Павел. Каçар, Ваçça, сан туйна пăснăшăн. Анчах та кун пек лайăхрах пулать.
Ваçça. Камшăн? Саншăн-и?
Нина. Пуриншĕн те, пуриншĕн те, Ваçça..
Ваçça. Пуриншĕн те? Пуриншĕн те лайăх пулать-и? Чăнах-и, Нина?
Нина. Чăнах, Ваçça.
Ваçça. Паллах чăнах. Ма кун пирки шутламан-ха эп? Эх, Нина, тух атя мана качча.
Нина. Хаваспах, Ваçça.

*Ваçça Нинана йăтса илет.*

Вĕçĕ.

1992 çул.